25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пу[illegible]

1942 ОКТЯБРЬ 6 ЫТЛАРИКУН 233 (6168) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетар[illegible], пĕрлеш[illegible]

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Фронт ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе хăвăртрах вĕçлеме хушать

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ «Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» Чăваш АССР Совнарком председателĕн А. Матвеев юлташăн докладне сÿтсе-явса тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кунĕсенче ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси государство ĕçĕнче уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ылханлă тăшмана çĕнтерме тăван çĕршывпа фронта мĕн кирлине пурне те туса парас патриотизмлă туйăмпа пурăнакан колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн вĕçлесе пыраççĕ. Республикăри малта пыракан колхозсем: Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Вăрмар районĕнчи «Большевик», «Атнаш», Октябрьски районри «Социализм», «Заря» тата ытти колхозсем государствăна тырă памалли плана срокчен, сентябрĕн малтанхи çуруйăхĕнчех, пурнăçа кĕртнĕ. Шупашкар районĕнчи колхозсем, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултарас ĕçпе тĕрĕс çыхăнтарса пырса, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырпул хатĕрлев планне 73 процент пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси республикăра кăçалхи çул çапах та çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Тырпул хатĕрлемелли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикипе пурĕ 41,3 процент кăна тултарнă. Ку енĕпе Шăмăршă, Пăрачкав, Первомайски, Елчĕк тата Чкаловски районсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ.

Çав районсенчи партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «1942 çу[illegible] тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртмен, çав ĕçсем хăйсем тĕллĕн пулса пырассине шаннă, авăн çапас ĕçе вăраха янă, çапла вара тырпул парас тĕлĕшпе правительство кăтартнă сроксене пăснă.

МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли план уйрăмах начар пурнăçа кĕрсе пырать. Республикăри колхозсем натуроплата шучĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырă пĕтĕмпе те 30,1 процент чухлĕ кăна панă. Натуроплата тÿлемелли плана тултарассишĕн МТС директорĕсемпе политотделсен начальникĕсем государство умĕнче тÿрремĕнех ответлă пулса тăни çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ асăрхаттарнине Чкаловски, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕрпÿ тата Кувакино МТС-ĕсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсем ăнланса илмен, МТС панă счетсем тăрăх колхозсенчен натуроплата тыррине вăхăтра пухас ĕçе тивĕçлипе организацилемен.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем пухса кĕртес тĕлĕшпе уйрăм райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем пĕлтĕрхи йăнăшсене тăваççĕ, çак ĕçе вăраха хăварса пыраççĕ. Çавна пула çĕрулмипе пахча-çимĕçсен пĕр пайĕ шăнса пăсалма пултарать, государство умĕнчи обязательствăсене тултарасси кая юлать. Ĕç çине çавăн пек тÿсме çук сÿрĕккĕн пăхнă пиркиех республикăри колхозсем государствăна çĕрулми памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 28,5 процент кăна, пахча-çимĕçсем памалли плана 36,6 процент кăна тултарнă, Шăмăршă, Кувакино, Улатăр районĕсенчи колхозсем государствăна çĕрулми памалли хăйсен обязательствисене 2,9 процентран пуçласа 7,9 процента çити кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Çавăн пекех ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем — аш-какай, çăм, махорка хатĕрлес ĕçсем те çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Шăмăршă, Калинино тата Советски районсем паян куна çитсе те государствăна утă парса татман.

Нумай çĕрте хатĕрлев наркомачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем, райисполкомсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем государство умĕнчи обязательствăсене единоличниксемпе колхозниксен хуçалăхĕсем мĕнле тултарса пыни çине çавăрăнса пăхмаççĕ, çав обязательствăсене пĕр пăркаланмасăр тултармалла тăвассишĕн татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Единоличниксемпе колхозниксен хуçалăхĕсем тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикипе пурĕ те 6,5 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ, Первомайски, Куславкка, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски тата Тăвай районĕсенчи единоличниксем паянхи куна çитсе государствăна пĕр пĕрчĕ те тырă паман.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана çавăн пек çителĕксĕр пурнăçласа пыни парти организацийĕсем массăллă-политикăллă ĕçе хуçалăх задачисемпе таччăн çыхăнтарса пыманнинчен килет. Нумай çĕрте ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем, райисполкомсемпе ялсовечĕсен председателĕсем, хатĕрлев оргăнĕсен работникĕсем пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх мĕн тери пысăккине вĕçне çитиччен ăнланса илмен, йăваш чунлă пулма, тимлĕхсĕр пулма пăрахман, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларас йăлана пĕтермен, государствăна тырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата ытти продуктсем памалли пилĕккунлăх заданисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине куллен тĕрĕслесе пырас ĕçе йĕркелемен, колхозăн шалти нушисем валли тата колхозниксене аванс шучĕпе пама тырă уйăрас йĕркене пăснине чарса лартас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнман, государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçе чарса пыракан уйрăм колхозсен руководителĕсене тивĕçлĕ ответ тыттарман.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çак çитменлĕхсене пĕтерме, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тума республикăри хатĕрлев оргăнĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райсовет исполкомĕсен председателĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене çирĕп кăтартусем парса хăварчĕ.

Тырпулсемпе ытти ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç тÿсме çук кая юлса пынине халех пĕтермелле, государство умĕнчи обязательствăсене пĕр пăркаланмасăр, кăтартса панă сроксенче парса татмалла. Çакна тума авăн çапас, çĕрулми кăларас, пахча-çимĕçсем пухса кĕртес ĕçе çине тăрсах хăвăртлатас пулать. Авăн çапнă çĕрте мĕнпур молотилкăсене, тракторпа ĕçлекеннисене те, лашапа ĕçлекеннисене те, ĕçлеттермелле, çак ĕçе комбайнсене куçармалла, çавăн пекех авăна алăпа çапассине те анлăн организацилемелле. Авăн çапас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе колхозсем пилĕккунлăх заданисене пĕр пăркаланмасăр тултарса пыма тивĕçлĕ. Çав заданисене пурнăçа кĕртсе пыман руководительсем государство умĕнче çирĕп ответ тытаççĕ.

Хăшпĕр çĕрте хатĕрлев пункчĕсене ялхуçалăх продукчĕсем турттаракан колхозниксене мĕнчухлĕ тырă, çĕрулми е пахча-çимĕç турттарса кайнине шута илсе мар, хатĕрлев пунктне миçе хут кайнине шутласа тÿлеççĕ. Çакă вăл тĕрĕс мар. Колхозниксене ĕçкунĕсем хатĕрлев пунктне миçе хут кайса килнишĕн мар, вĕсем миçе пăт тырпул, çĕрулми е пахча-çимĕç турттарса кайнишĕн шутласа памалла. Çакă вăл колхозниксене хăвăртрах та ытларах тырă турттарма хавхалантарать.

МТС-сен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсем, натуроплата тыррине пухассишĕн государство умĕнче хăйсем тÿрремĕнех ответлă пулнине туйса тăрса, кашни колхоз натуроплата тыррине мĕнле парса пынине октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр тĕрĕслесе тухма тивĕçлĕ, çак енĕпе колхозсене панă счетсем тăрăх тухакан мĕнпур тырра хатĕрлев пункчĕсене халех леçсе парас ĕçе организацилемелле. МТС ĕçĕшĕн тÿлемелли натуроплатăна вăхăтра татман колхозсем тĕлĕшпе законпа пăхнă мерăсене йышăнас пулать.

Вăрçă вăхăтĕнче пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине типĕтсе, тăварласа, йÿçĕтсе хатĕрлесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна тума мĕнпур сушилкăсене, пахча-çимĕçсем тăварласа йÿçĕтмелли пунктсене халех йĕркене кĕртмелле, çĕрулмипе пахча-çимĕçсене типĕтес, тăварласа йÿçĕтес ĕçе пур çĕрте те халех тытăнмалла.

Çакăнпа пĕрлех республикăри суту-илÿ организацийĕсен хăйсен енĕпе хуласемпе промышленность предприятийĕсем валли çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе çине тăрса туса пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ хатĕрлев пункчĕсенче тивĕçлĕ йĕркелĕх çуккине палăртса, ку енĕпе хатĕрлев оргăнĕсене ĕçе халех йĕркене кĕртме, ВКП(б) райкомĕсене хатĕрлев органĕсен ĕçне куллен ертсе пыма хушса хăварчĕ.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра татассишĕн, çĕршывпа фронт валли, хуласемпе промышленность предприятийĕсем валли çителĕклĕ таран ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парассишĕн кĕрешсе, ялсемпе хуласенчи ĕççыннисем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕçе татăклăн вăйлатмалла, çак ĕçе хуçалăхри задачăсене пурнăçа кĕртессипе куллен таччăн çыхăнтарса пымалла.

Мĕнпур партипе совет организацийĕсен руководителĕсен çакна лайăх ăнланса илмелле: вăрçă вăхăтĕнчи законсемпе пурăнасси тата ĕçлесси вăл — кĕрешÿре йăваш чунлă пулма, тимлĕхсĕр пулма пуçĕпех пăрахмаллине, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларнине хирĕç татăклăн кĕрешмеллине пĕлтерет. Мĕнпур колхозниксемпе совет учрежденийĕсенче хурçă пек çирĕп дисциплина, хурçă пек çирĕп йĕрке тăвас пулать, тăван çĕршыв оборонине пысăк сиен кÿрекен ĕçри сÿрĕклĕхе, юхăнчăксене пĕтерес пулать.

Колхозсен, колхозниксемпе колхозницăсен Октябрь уявĕ умĕнчи социализмлă ăмăртăвне анлăн сарса, фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлатар, уборкăри мĕнпур ĕçсене хăвăртрах вĕçлер, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртер.

Çапла тума хушать юратнă тăван çĕршыв, çапла тума хушаççĕ фронтри паттăр воинсем!

Информацилле пĕлтерÿ

ВКП(б) Обкомĕн черетлĕ пленумĕ çинчен

1942 çулхи октябрĕн 3—4-мĕшĕсенче ВКП(б) Обкомĕн черетлĕ XII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум «Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» Чăваш АССР Совнарком председателĕн МАТВЕЕВ юлташăн докладне тата «СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Çамрăк выльăхсене сыхласа хăвармалли тата колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пыни çинчен» ВКП(б) Кувакино тата Йĕпреç райкомĕсен секретарĕсен БОЧКОВПА АРТЕМЬЕВ юлташсен доклачĕсене сÿтсе-явса, вĕсем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум П. Т. ПИВОВАРОВ юлташа ВКП(б) Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕн ĕçĕнчен хăтарса, ăна ВКП(б) Обком бюровĕн членĕсен составĕнчен кăларчĕ, А. В. СОМОВ юлташа, вăл районри ĕçе куçнă майпа, пленум ВКП(б) Обкомĕн бюровĕн членĕсен составĕнчен кăларчĕ.

Пленум А. М. МАТВЕЕВ юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕн ĕçĕнчен хăтарчĕ.

Пленум Н. И. БЕЛКОВ юлташа ВКП(б) Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма çирĕплетрĕ тата ăна Обком пленумĕн составне, ВКП(б) Обком бюровĕн членĕсен составне кĕртрĕ; Т. А. АХАЗОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕ пулма; М. А. АНДРЕЕВ юлташа, ВКП(б) Обком бюровĕн членне, — ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма; С. М. КРЫЛОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн оборона промышленноçĕ енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма; М. И. РЕПКИН юлташа — ВКП(б) Обкомĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма; М. А. КУЗЬМИН юлташа — ВКП(б) Обкомĕн суту-илÿпе обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма çирĕплетрĕ.

Пленум çавăн пекех Г. А. МАРТЫНОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ пулма; А. П. РЯБОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ пулма; Д. Ф. ТАЛДЫКИН юлташа — ВКП(б) Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ пулма; И. М. ЛОВЯГИН юлташа — ВКП(б) Обкомĕн оборона промышленноçĕн отделĕн заведующийĕ пулма; С. Г. ШИШКИН юлташа — ВКП(б) Обкомĕн суту-илÿпе обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен отделĕн заведующийĕ пулма; Г. Д. ЗАХАРОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн кадрсен отделĕн заведующийĕн заместителĕ пулма; С. И. СДОБНОВ юлташа — ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕн заместителĕ пулма çирĕплетрĕ.

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ.

ВКП(б) Обкомĕнче

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă ятпа государствăна тырă леçмелли хĕрлĕ обозсем организацилеме йышăннă. ВКП(б) райкомĕсене октябрĕн 8-мĕшĕпе ноябрĕн 6-мĕшĕ хушшинче колхозсенчен государствăн хатĕрлев пункчĕсене хĕрлĕ обозсем ăсатассине йĕркелеме хушнă.

Тырăпа хĕрлĕ обозсем ăсатас мĕнпур ĕçе государствăна тырă памалли обязательствăсене кăçалхи ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн районсем, ялсовечĕсем тата колхозсем хушшинче анлă ăмăрту сарнипе туса ирттермелле.

ВЛКСМ Обкомне çак ĕçе комсомолăн ялти мĕнпур организацийĕсене активлăн хутшăнтарма хушнă. Республикăри тата районсенчи хаçатсен малта пыракан колхозсене, государствăна тырă памалли хăйсен обязательствисене ăнăçлăн тултарса пыраканскерсене, анлăн çутатса тăмалла.

Тырпул хатĕрлес ĕçе Октябрьти революци XXV çул тултарнă тĕле вĕçлессишĕн социализмлă ăмărту анлăн сарса ярас тĕлĕшпе пулăшу пама партипе совет организацийĕсенчен районсене ответлă работниксене командировкăна ямалла тунă.

И. В. СТАЛИН ЮЛТАШ АССОШИЭЙТЕД ПРЕСС АГЕНТСТВИН КОРРЕСПОНДЕНЧĔН ЫЙТĂВĔСЕМ ÇИНЕ ПАНĂ ОТВЕТСЕМ

Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин Мускаври корреспонденчĕ Кэссиди господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патне çыру янă, çав çырура вăл Сталин юлташран Америкăри общественноçа интереслентерекен виçĕ ыйту çине сăмахпа каласа е çырса ответ пама ыйтнă.

И. В. Сталин юлташ Кэссиди господина çакăн пек çыру ярса ответленĕ:

Кэссиди господин!

Пушă мар пирки, çавăнпа та вара Сире интервью пама пултарайман пирки, Сирĕн ыйтăвăрсем çине кĕскен çырса çеç ответ паратăп.

1. «Хальхи лару-тăрăва хакланă чух не советсем иккĕмĕш фронт уçălma пултарассине мĕнле вырăна хураççĕ?»

Ответ. Питĕ пысăк вырăна, калама пулать—чи малти вырăна хураççĕ.

2. «Союзниксем Совет Союзне паракан пулăшу çителĕклĕ пысăк-и, çав пулăшăва анлăлатса лайăхлатмашкăн мĕн тума пулнă пулĕччĕ?».

Ответ. Совет Союзĕ нимĕçсен фашистла войскисене хăй патнелле туртса тăрса союзниксене пулăшнипе танлаштарсан, союзниксем Совет Союзне паракан пулăшу çителĕксĕр-ха. Çав пулăшăва анлăлатса лайăхлатмашкăн пĕр япала çеç кирлĕ: союзниксем хăйсен обязательствисене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртни çеç кирлĕ.

3. «Совет Союзĕн тăшмана хирĕç тăрас пултарулăхĕ мĕнле-ха?»

Ответ. Эпĕ çапла шухăшлатăп: Совет Союзĕн нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç тăрас пултарулăхĕ, вăй енчен илсен, фашистла Германин е агрессиллĕ мĕнле те пулин урăх державăн тĕнчере пуç пулса тăрас пултарулăхĕнчен маларах пулмасан, унтан каях мар.

Сире хисеплесе **И. СТАЛИН.**

1942 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕ.

Колхозсем выставка уçăлас умĕн

ШАХАСАН. Районри колхозсене выставка пуласси çинчен август уйăхĕнчех пĕлтернĕ. Çав вăхăтран вара колхозсем выставкăна хутшăнассишĕн кĕрешÿ пуçласа ячĕç.

Ямпахри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз (председателĕ Александров юлташ) паянхи куна ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ, государство умĕнчи парăмсене 100 проценчĕпех татнă. Колхоз кăçал кашни гектар пуçне 14-шар центнер ытла тĕштырă туса илсе, выставкăна хутшăнма право илчĕ. Нумай колхозсем выставкăна уйрăм культурăсемпе хутшăнаççĕ. Хирти Тукайри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз гектар пуçне 17,98 центнер, «III Интернационал» колхоз 15 центнер урпа илнĕ.

Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ильин юлташ, ферма заведующийĕ Матвеева юлташ) выставкăна выльăх-чĕрлĕх енĕпе хутшăнать. Колхоз паянхи куна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Майракаллă шултăра выльăхсем план тăрăх 45 пуç пулмалла пулсан, вĕсем халĕ 68 пуç пур, сыснасем 120 пуç вырăнне 160 пуç пур. Ытти выльăхсем енĕпе те плансене тултарнă. Вĕсем 20 пăру вырăнне 28 пăру контрактациленĕ, 28 путек вырăнне 39 путек контрактациленĕ, 100 чăх сутăн илнĕ. Выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне ÿстермелли плана тултарнă.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз выставкăна кроликсем тăратать. Ку колхозра 30 кроликран çулталăк хушшинче 450 çăвăр илнĕ, вăл кашни ама пуçне вăтамран 15 çăвăр илни пулать.

Сителри «Победа» колхозран чаплă экспонатсем—сысна амисем пыраççĕ. Ку колхозăн сысна ферминчи (ферма заведующийĕ Трофимов Софрон) 5 сысна ами, кашниех 19—20-шер çăвăр турĕç.

Кунсăр пуçне, выставкăра ăратлă ăйăрсем, кĕсресем, ĕнесем, вăкăрсем т. ыт. те пулаççĕ.

МТС-ран тракторсен бригадисемпе бригадирсем, трактористсемпе комбайнерсем нумайĕшĕ выставкăра пулма тивĕçлĕ пулнă. Морозов, Петров, Филиппов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне август уйăхĕнчех тултарнă. Кун пек бригадăсем мĕнпурĕ 9. М. Тимофеев комбайнер тырпул пухмалли плана 315,4 процент, Васильева, Моисеев, Н. Тимофеев, Чернов, Илларионов комбайнерсем 195—160 процент тултарчĕç

Халĕ колхозсенче тĕштырă, тымарçимĕç экспоначĕсем хатĕрлеççĕ. Октябрĕн 23-мĕшĕнче районри выставка уçăлмалла. Анчах та выставкăна хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Выставка вырăнне хатĕрлес, диаграммăсем тăвас ĕç начар пырать.

С. СОКОЛОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн маршалне Б. М. Шапошников юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Совет Союзĕн маршалĕ **Б. М. Шапошников** юлташ çурални 60 çул тултарнă май тата вăл Совет государстви умĕнче çар тĕлĕшпе питех те палăрса тăракан ĕçсем тунине паллă туса, Борис Михайлович **Шапошников** юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти октябрĕн 3-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар пехотин командн ăй составне вĕрентмелли Хĕрлĕ ялавлă высши стрелково-тактически курса тата Тамбоври Хĕрлĕ ялавлă пĕрремĕш пехотнăй училищĕне Совет Союзĕн маршалĕ Б. М. Шапошников юлташăн ятне парасси çинчен

Çаксене Совет Союзĕн маршалĕ Б. М. Шапошников юлташăн ятне парас:

1. Хĕрлĕ Çар пехотин командн ăй составне вĕрентмелли Хĕрлĕ ялавлă высши стрелково-тактически курса.
2. Тамбоври Хĕрлĕ ялавлă пĕрремĕш пехотнăй училищĕне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти октябрĕн 3-мĕшĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет Союзĕн маршалне Б. М. Шапошников юлташа янă салам

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене чи активлăн организациленисенчен пĕрне тата Хĕрлĕ Çарăн чаплă полководецне, Эсир çурални 60 çул тултарнă кун хĕрÿллĕн саламлаççĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире сывлăх сунаççĕ тата пирĕн тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çарăн хăватне çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе малашне те ăнăçлăн ĕçлесе пыма сунаççĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

Оборона Халăх Комиссариачĕ Совет Союзĕн маршалне Б. М. Шапошников юлташа янă салам

Оборона Халăх Комиссариачĕ Сире Эсир 60 çул тултарнă ятпа хĕрÿллĕн саламлать.

Хĕрлĕ Çара тусассăн малтанхи кунсенчен пуçласах хăвăрăн пысăк военоначальникăн çар пĕлĕвĕсемпе опытне Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене туса çирĕплетес ĕçе парса, Эсир чĕрĕк ĕмĕр тăршшĕнче войскăсен боевой вĕренĕвне лайăхлатас тĕлĕшпе тата Хĕрлĕ Çарăн халĕ гитлерла йыткĕтĕвĕне хирĕç паттăр кĕрешекен командирĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕр:

Оборона Халăх Комиссариачĕ Сире сывлăх сунать тата малашне те пирĕн тăван çĕршывшăн ăнăçлăн ĕçлесе пурăнма сунать.

ССР СОЮЗĔН ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ.

Çĕртме тăвас ĕçе хакламаççĕ

ЕТĔРНЕ. **(Телефонпа).** План тăрăх районри колхозсен 7.900 гектар кĕрхи çĕртме туса хăвармалла. Анчах та кĕрхи çĕртме тăвассине колхоз председателĕсемпе ялсовет председателĕсем тивĕçлипе хакламаннине пула, октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 2.137 гектар çеç сухаланă.

Нумай колхозсем кĕрхи çĕртме тума виç-тăватă кун каярах тин тытăннă. «17-мĕш партсъезд» колхоз 500 гектар вырăнне 62 гектар, «Парижская Коммуна» колхоз 310 гектар вырăнне 45 гектар, Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 250 гектар вырăне 70 гектар кăна çĕртме сухи тунă.

И. ЛЬВОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Октябрӗн 4-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 4-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Иртнӗ эрнере, сентябрӗн 27-мӗшӗнчен пуҫласа октябрӗн 3-мӗшӗччен, сывлӑшри ҫапӑҫусенче, аэродромсенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗҫсен 257 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн 137 самолет пӗтнӗ.

* * *

Октябрӗн 3-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 12 танкне тата войскӑсем турттарса пыракан 140 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 3 складне сирпӗнтерсе янӑ, пӗр поезда ҫӗмӗрнӗ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Сталинград районӗнче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Противникӑн пехотипе танкӗсем пирӗн позицисене тӑтӑшах атакӑлаҫҫӗ. Нимӗҫ пехотин икӗ батальонӗ танксем пулӑшса пынипе Н-ски чаҫӑн позицийӗсене кункаҫа 6 хутчен атакӑланӑ. Пирӗн боецсем артиллери пулӑшнипе гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсем красноармеец Памарьян юлташ тӑнӑ дзота тытса илме хӑтланнӑ. Хастарлӑ боец хӑй патне талпӑнса пыракан гитлеровецсене пӗр хӑрамасӑр вӗлерсе тӑнӑ. Вӑл 17 нимӗҫ салтакне пӗрин хыҫҫӑн теприне персе вӗлернӗ, хӑйне пулӑшма ытти боецсене яриччченех дзота хӑйӗн аллинче тытса тӑнӑ. Тепӗр участокра пирӗн гвардеец-зенитчиксем нимӗҫсен 4 танкне ҫунтарса янӑ, миномётсен 3 батарейине пусарса лартнӑ, 7 дзота ҫӗмӗрнӗ тата нимӗҫсен пехотине 3 ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр участокра пирӗн войскӑсем активлӑн ҫапӑҫнӑ. Пӗр высотӑшӑн пынӑ ҫапӑҫура Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсен 2 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата тӑшманӑн 150 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр оруди, 8 пулемет, 4 миномет тата боеприпассем тытса илнӗ. Пирӗн разведчиксен ушкӑнӗ противникӑн пӗр чаҫӗн командӑй пунктне хӑюллӑн тапӑннӑ та штабӑн паха докуменчӗсене тытса илнӗ.

* * *

Моздок районӗнче халӑх пурӑнакан пӗр пунктра ҫапӑҫнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем пӗр кун хушшинче противникӑн пехотипе танкӗсен ултӑ атакине сирсе янӑ. Нимӗҫсен 7 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата гитлеровецсене икӗ ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Бокадзе юлташ ертсе пыракан минометчиксем 100 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, 6 автомашинӑна тата пӗр станковӑй пулемета расчечӗ-мӗнӗпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Воронеж районӗнче пӗр участокра пирӗн пехотинецсемпе танкистсем хӑюллӑн атакӑласа, противник тӑракан вырӑна ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Гитлеровецсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, пирӗн чаҫсем оборона рубежне тытса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче пӗр кун хушшинче противникӑн 1.800 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнисем пур.

* * *

Румынсен 6-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 10-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ лейтенант Ион Верде ҫапла каласа панӑ: «Пӗлтӗрхи ҫапӑҫусенче пирӗн дивизие ҫапса аркатрӗҫ. Унӑн юлашкийӗсене тыла илсе кайрӗҫ. Унта дивизие ватӑрах салтаксем хушса пачӗҫ. Вӗсене пӑртак вӗрентнкелерӗҫ те часах ҫӗнӗрен фронта ячӗҫ. Фронта каяс умӗн пӗр кун малтан казармӑра уйрӑм минометнӑй ротӑри икӗ салтак ҫакӑнса вилнӗ. Полкран 40 ҫын тарнӑ. Нимӗҫсем пирӗн дивизие фронтӑн хӑрушӑ участокне ячӗҫ. Вӑл дивизире вара малтанхи кунсенчех 2.000 ҫын ытла пӗтрӗ».

* * *

Нимӗҫсен 110-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 264-мӗш полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Рудольф Церек ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ пулнӑ ялсенче вырӑссем пурте номерсем ҫакса ҫӳреҫҫӗ. Нимӗҫ комондатурисем вырӑссене картас мар тесе ҫапла тума шухӑшласа кӑларнӑ. Номерсӗр пӗр вырӑс та урама тухма пултараймасть. Ялтан тухма чарса лартнӑ. Нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем ҫынсем партизансем патне тарса каясран хӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсенчен каякаҫулсене, вӑл пунктсене кӗмелли, вӗсенчен тухмалли вырӑнсене тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ»

* * *

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Макеевка хулине (Донбасс) выҫӑ вилӗмпе вилмелле туса хураҫҫӗ. Макеевкӑри пур магазинсене те хупнӑ. Ҫынсене хуларан тухма чарса лартнӑ, тухакансене вӗлереҫҫӗ. Сентябрь уйӑхӗн вӗҫӗнче гитлеровецсем Макеевкӑри 23 ҫынна, сывӑхри ялсене продовольстви шырама тухса кайнӑскерсене, тытнӑ. Вӗсене вара пурне те персе вӗлернӗ. Макеевкӑран тухса кайма хӑтланнӑшӑн гитлеровецсем металлурги заводӗнче ӗҫлекен 55 ҫулхи рабочие Назар Алексеевич Редькона, тӑватӑ ача амӑшне Анастасия Георгиевна Чуйкона тата 14 ҫулхи Лева Петренкона телефон юписем ҫине ҫакса вӗлернӗ.

Октябрӗн 5-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрӗн

Октябрӗн 5-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

Сталинград районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Противник завод поселокӗ еннелле хаяр атакӑсем тӑвать. Питех те пысӑк сухатусем тӳссе, тӑшман пирӗн пӗр чаҫа кӑштах хӗсме пултарнӑ. Ытти участоксенче гитлеровецсен атакисене пирӗн войскӑсем сирсе-сирсе пӑрахнӑ. Артиллеристсем [illegible] тӑшманӑн 2 батальона ҫити пехоти вӗлерсе пӗтернӗ, пулеметӑн 24 точкине, 3 орудине тата миномётсен виҫӗ батарейине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски чаҫӑн боецӗсем, пӗр высота районӗнчи ҫапӑҫура, нимӗҫсен 150 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 2 танка персе ҫӗмӗрнӗ, 15 пулемета тата боеприпассем тиенӗ 2 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Пехотӑн хӗҫпӑшалӗпе персе нимӗҫсен 3 самолетне ӳкернӗ. Тепӗр участокра пирӗн гвардейски подразделенисем тӑшмана атакӑласа хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн танкӗсемпе пехотин атакисене сире-сире пӑрахнӑ. Ӑнӑҫсӑр пулнӑ атакӑсенче гитлеровецсем 6 танк тата хӑйсен пехотине пӗр рота ытла ҫухатнӑ. Тепӗр участокра тӑшманӑн батальонӗ пӗр ту хушӑкӗпе малалла шӑтарса кӗме хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑрса кӗтсе илнине пула, нимӗҫсем, ҫапӑҫу хирӗнче хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен 80 виллине пӑрахса хӑварса, каялла чакнӑ.

* * *

Воронежран ҫурҫӗр еннерехре халӑх пурӑнакан пӗр пунктӑн хӗрринче пулса иртнӗ ҫапӑҫура пирӗн чаҫсем противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 400 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 11 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата 6 танкне ҫунтарса янӑ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче Васильев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть нимӗҫ пехотин хаяр атакине сирсе пӑрахнӑ, противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Старши лейтенантӑн Дякун юлташӑн батарейинчи артиллеристсем противникӑн икӗ танкне ҫунтарса янӑ, противотанковӑй 2 орудине тата 6 огневой точкине пӗтерсе тӑкнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ Носов юлташ ертсе пыракан 8 летчик-штурмовик тӑшманӑн вӑйӗсем пухӑннӑ тӑрӑха вӗҫсе пынӑ та нимӗҫсен 6 автомашинине, пӗр танкне тата салтаксемпе офицерсене 50 ҫынна ҫитла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Совет летчикӗсем противникӑн пысӑк аэродромне вӗҫсе пырса тапӑннӑ. [illegible] Ҫавӑнта тапӑннӑ чух нимӗҫсен 60 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 76-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 178-мӗш полкӗнчи салтак Эмиль Т., Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑскер, ҫапла каласа панӑ: «Нумаях та пулмасть пирӗн полкӑн ротисенче 150-шар салтак шутланатчӗ, халӗ ӗнтӗ батальонра та салтаксем икӗ хут сахалтарах тӑрса юлнӑ. Гитлершӑн хамӑн пуҫа ҫапӑҫу хирӗнче хума е кӗрт хушшинче шӑнса вилме манӑн нимӗнле кӑмӑл та ҫук. Эпӗ салтаксен ушкӑнӗпе тыткӑна парӑнасси ҫинчен калаҫса татӑлтӑм. Эпир ҫапӑҫу пуҫланас умӗн 8 салтак окопсенчен тухрӑмӑр та вырӑссем патнелле шуса кайрӑмӑр. Пынӑ май эпир рота командирне — фон-Мельцен лейтенанта асӑрхарӑмӑр. Эпӗ Мельцен ҫине автоматран персе ятӑм та вара юлташсемпе пӗрле пӗр лапама тарса пытантӑмӑр. Вырӑссем патне ҫывхарса ҫитсен, эпир хӗҫпӑшалсене пӑрахрӑмӑр та, алӑсене ҫӗклесе тыткӑна парӑнтӑмӑр».

* * *

Нимӗҫсемпе финсен вӑрӑ-хурахӗсем тыткӑна лекнӗ совет боецӗсене тискеррӗн асаплантарни ҫинчен Ленинград фронтӗнчи Н-ски чаҫӑн боецӗсемпе командирӗсен группи акт ҫырнӑ. Актра ҫапла каланӑ: тӑшманӑн позицийӗсене Хӗрлӗ Ҫар йышӑнса илнӗ хыҫҫӑн ҫырмара боецсен, гитлерла палачсем тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗскерсен, 13 виллине тупнӑ. Кӗҫӗн командирӑн Алексей Борисович Лунинӑн тата ытти паллӑ мар красноармеецсен виллисем ҫинче вӗсене этемле мар асаплантарнӑ йӗрсем пур. Фашистла мерзавецсем тыткӑна лекнӗ красноармеецсен пӳрнисене касса татнӑ, куҫӗсене чике-чике шӑтарнӑ, хырӑмӗсене ҫура-ҫура пӑрахнӑ. Акт ҫине ҫаксем алӑ пуснӑ: военфельдшер Г. Х. Хамитов, красноармеецсем—С. Синицын, В. Клочко тата ыттисем те.

ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ НУМАЙРАХ ӖРЧЕТСЕ АШ-КАКАЙ ЫТЛАРАХ ТӐВАР

Совет тылӗ умӗнче тӑракан задачӑсенчен пӗри вӑл—пирӗн Хӗрлӗ Ҫар тата халӑх валли ҫителӗклӗ таран аш-какай, сӗт-ҫу парса тӑрасси пулать. М. И. Калинин юлташ ҫапла каланӑ: «...боецсене лайӑх, тутӑллӑ тата тутлӑ тӑрантарас пулать. Пирӗн ҫар валли тата халӑх валли аш-какай нумайрах туса хатӗрлемелле», тенӗ. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырасси вӑл—колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн продуктивноҫне хӑпартас тӗлӗшпе государство планне тултарса пынинчен килет.

Сӗнтӗр районӗнчи колхозсем кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе государство планне пурнӑҫа кӗртессишӗн хытӑ тӑрӑшрӗҫ. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне районри плана сыснасен йышӗ тӗлӗшпе 138 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе—98 процент, сурӑхсем енӗпе — 82 процент, пӑрулакан ӗнесем енӗпе—103 процент, ҫурӑ тӑвакан сыснасем енӗпе—109 процент тултарчӗҫ.

Фермӑсенчи выльӑхсен йышне планпа кӑтартнӑ шута ҫитерме колхозсем колхозниксенчен тата выльӑхсем йышлӑ колхозсенчен мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем 858 пуҫ туяннӑ (плана 103 процент тултарнӑ), сурӑхсемпе качакасем 785 пуҫ туяннӑ (плана 53,7 процент тултарнӑ), сыснасем 271 пуҫ туяннӑ (плана 180 процент тултарнӑ).

Районри колхозсем чылайӗшӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур йышши выльӑхсем тӗлӗшпе те тултарчӗҫ. Сӑмахран, «Красное Сормово» колхоз мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем ӗрчетес тӗлӗшпе плана 141 процент, сурӑхсем ӗрчетес тӗлӗшпе — 135,8 процент, сыснасем ӗрчетес тӗлӗшпе—133,6 процент, кайӑк-кӗшӗк ӗрчетес тӗлӗшпе—215 процент тултарчӗ. Ӗнесӗр колхозниксене ӗнеллӗ тума колхоз 11 пӑру контрактациленӗ. Колхоз государствӑна аш-какай, сӗт тата ҫӑмарта парас тӗлӗшпе ҫулталӑкри плана пӗтӗмпех тултарнӑ. Выльӑхсен йышне ӳстернипе пӗрлех колхоз выльӑхсен продуктивноҫне хӑпартма тӑрӑшнӑ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарас тӗлӗшпе партипе советсен районри организацийӗсем, чылай колхозсен правленийӗсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Ҫавна пула кӑна пирӗн район ку енӗпе плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать.

Кунпа пӗрлех, пирӗн ҫак ӗҫре ҫитменлӗхсем те пур. Чылай колхозсенче сурӑхсемпе качакасем, кроликсем тата кайӑк-кӗшӗксем ӗрчетес ӗҫ ҫине сахал ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Ҫавна пула ӗнтӗ сурӑхсемпе качакасем тата кроликсем ӗрчетес тӗлӗшпе районри план тулман, кайӑк-кӗшӗксем ӗрчетес тӗлӗшпе план 86 процент кӑна пурнӑҫа кӗнӗ. Контрактациленӗ выльӑхсене фермӑсене илсе пырасси ҫине ҫителӗклӗ ҫаврӑнса пӑхмаҫҫӗ. Ҫапла, Шашкар ялсоветӗнчи колхозсем 73 пӑру тата 91 путек контрактациленӗ пулсан, вӗсенчен 8 пӑрӑва ҫеҫ фермӑсене илсе пынӑ, пӗр путек те фермӑсене илсе пыман. Ҫавӑн пекех Апчар ялсоветӗнче 46 пӑру тата 31 путек контрактациленӗ пулсан, фермӑсене 11 пӑру кӑна илсе пырса янӑ.

Выльӑх-чӗрлӗхсен йышне ӳстерес тесен, пирӗн ҫамрӑк выльӑхсене пурне те пӑхса ӳстерес пулать. Анчах уйрӑм колхозсенче тихасене, пӑрусене, сысна ҫурисене, путексене кирлӗ пек пӑхса ӳсрмаҫҫӗ-ха. Ҫавна пула вӗсем вилнисем те пулкалать. Сӑмахран, «Волга» колхозра—путексем, Хачӑк ялсоветӗнчи «1-ое мая» колхозра—сысна ҫурисем, «Авангард» колхозра—тихасем чылай вилни пулнӑ. Чӑн та, ҫамрӑк выльӑхсене лайӑх пӑхманшӑн айӑпа кӗнисене ответ тыттарнӑ, выльӑхсем илсе пар-тарнӑ. Анчах кунпа районра выльӑх-чӗрлӗхсен йышӗ хушӑнмасть вӗт-ха. Кун пек ан пултӑр тесен, колхозсен фермисенче ҫирӗп йӗркелӗх туса, выльӑхсене пурне те лайӑх пӑхса ӳсрама тӑрӑшас пулать.

Районра выльӑхсене вӑхӑтра чуптарса хӑварманни те пулнӑ. «Аврора», «Коммунар», «Пахарь», «Бригадир» тата Челюскин ячӗпе тӑракан колхозсем выльӑхсене чуптармалли плансене тултарман.

Выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫ те районра ҫителӗксӗр пулса пырать. Силос 6.000 тонна хатӗрлемелле пулсан, 4.797 тонна кӑна хатӗрленӗ. Ку енӗпе уйрӑмӑнах «Новый путь», «Красный герой», Чкалов ячӗпе тӑракан колхозсем япӑх ӗҫлеҫҫӗ. «Ким» тата «Аврора» колхозсем силос пӗр тонна та хывман.

Хальхи вӑхӑтра районри парторганизаци асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе ӗҫлет. ВКП(б) райкомӗн бюровӗпе райсовет исполкомӗн ларӑвӗнче «Ким» тата «Аврора» колхозсенче силос хывас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен ҫав колхозсен председателӗсен отчечӗсене итленӗ, вӗсене выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе мӗнле ӗҫсем тумаллине кӑтартса панӑ. Колхозсенче нумайӗшӗнче витесене хӗле кӗме хатӗрлеҫҫӗ. Кивӗ витесене юсаҫҫӗ, ҫӗнӗ витесем лартаҫҫӗ. Кӑҫал «1 мая» колхозра 60 пуҫ сурӑх валли, 100 пуҫ чӑх-чӗп валли ҫӗнӗ витесем лартнӑ. Шомик ялсоветӗнчи «Колос» колхозра 50 кролик тата 100 чӑх-чӗп валли витесем тунӑ. «Вперед» колхозра 25 сысна ами усрама вите лартнӑ. Ытти хӑшпӗр колхозсенче те ҫӗнӗ витесем тума тытӑннӑ.

Сӗнтӗр районӗнчи парторганизаци выльӑхсене хӗлле усрама хатӗрленсе ҫитес ӗҫ ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхма пуҫларӗ. Районра выльӑх апачӗ мӗн чухлӗ пуррине шута илнӗ, ферма заведующийӗсемпе выльӑх пӑхакансене зоотехникӑна вӗрентмешкӗн семинарсем ирттерме хатӗрленетпӗр.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе районри партипе совет органӗсем, партипе комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсем, ялсовечӗсемпе колхозсен председателӗсем, фермӑсен заведующийӗсемпе выльӑх пӑхакансем тӑрӑшса ӗҫлесен, эпир ҫывӑх вӑхӑтрах ку енӗпе государство планне ирттерсех тултарӑпӑр, Хӗрлӗ Ҫарпа ӗҫхалӑхӗ валли ытларах аш-какай парӑпӑр. Эпир ҫавна тума тивӗҫлӗ.

Г. ГУСЕВ,
ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗн секретарӗ.

Уяв парнисем хатӗрлеҫҫӗ

ШӐХАСАН, октябрӗн 5-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли уяв парнисем хатӗрлесе фронта ӑсатас тӗлӗшпе районри ӗҫҫыннисем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Колхозник, колхозница, служащисемпе учительсем кашниех паттӑр воинсем валли чаплӑ парнесем ярса параҫҫӗ.

Паянхи кун тӗлне илсен, районӗпе 53 килограмм ҫу, 76 килограмм пыл, 100 килограмм печени, 1.400 штука ҫӑмарта, пӗр тонна тулӑ ҫӑнӑхӗ, 400 килограмм какай, 67 килограмм махорка, 150 литр эрех, 1.500 килограмм ҫӗрулми, 400 килограмм купӑста, 70 килограмм кишӗр, 46 килограмм сухан, 80 килограмм тӑварланӑ хӑяр, уйрӑмӑн 30 посылка хатӗрлесе боецсем патне янӑ.

Уяв парнисем хатӗрлесе фронта ӑсатас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Шуркассинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ А. Ильин юлташ) лайӑх ӗҫлет. Ку колхоз боецсем патне 80 килограмм хӑяр, 5 килограмм пыл, тӗрлӗрен япаласемпе 10 посылка, 5 килограмм ҫу тата ыттисене те ярса панӑ.

Ҫавӑн пекех Калиновкари Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем те 3 килограмм ҫу, 6 килограмм пыл, Молотов ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем 50 килограмм какай, 4 килограмм ҫу, 4 килограмм пыл, 4 посылка, 8 килограмм махорка, 137 штука ҫӑмарта ярса пама хатӗрлерӗҫ.

Паттӑр боецсем патне яма Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем, райсоюзра ӗҫлекен служащисем те чылай парнесем хатӗрлесе панӑ.

В. ЯКОВЛЕВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, октябрӗн 2-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри ӗҫҫыннисем паттӑр воинсем валли парнесем хатӗрлесе фронта ярса парас тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Паянхи кун тӗлне боецсем валли пӗтӗмпе 500 килограмм ытларах аш-какай, 1.400 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 1.837 штука ҫӑмарта, 29 килограмм ҫу, 1.500 килограмм ҫӗрулми хатӗрленӗ, премӗксемпе ӗҫмеллисем илме 3.750 тенкӗ укҫа пуҫтарнӑ.

Парнесем хатӗрлесе парас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Вӗсем мӗнпурӗ 140 килограмм ҫимелли япаласем хатӗрлесе панӑ. Ҫавӑн пекех «Светлая жизнь» колхоз колбаси тума 122 килограмм, «Красный воин» колхоз 90 килограмм, «Искра первая» колхоз 114 килограмм, «Кзыл Сабанча» колхоз 56 килограмм какай пачӗҫ.

В. АВВАКУМОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

ВӐРМАР. Аслӑ Чак ялсоветӗнчи колхозсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне Октябрь уявӗ ячӗпе парнесем ярса пама йышӑнчӗҫ.

Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхозӑн членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне 2 килограмм сысна какайӗ, 5 килограмм ҫу, 3 килограмм пыл, 1 центнер ҫӗрулми, 50 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 8 килограмм табак ярса пама пулчӗҫ.

«Атнаш» тата «Ударник» колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем янисӗр пуҫне ӑшӑ тумтирсем, ҫӑматӑ, ҫӗлӗксем, фуфайка, носкисемпе алшишсем ярса параҫҫӗ.

В. АНДРИЯНОВ.

Ют ҫӗршывсенче

Уилкин „Лайф" журналра пичетленнӗ статьи

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). «Лайф» журналӑн черетлӗ номерӗнче, октябрӗн 2-мӗшӗнче тухаканскерте, Уилкин Мускавран янӑ статьине пичетленӗ. Ҫав статьяра вӑл хӑй Сталин юлташпа калаҫни ҫинчен ҫырать. Уилки каланӑ тӑрӑх, Сталин унпа калаҫнӑ чухне пӗрлешнӗ ҫӗршывсен ҫар тӗлӗшпе хытӑрах ӗҫлеме кирлине тата тӑрӑшни умри чӑрмавсене пӗтерме пултарнине кӑтартса панӑ.

Хӑй Сталинпа калаҫни ҫинчен Уилки ҫапла ҫырать: «Калаҫнӑ чухне эпир иксӗмӗр те хамӑра-хамӑр ирӗклӗн тытрӑмӑр. Чи малтанах ҫакӑ паллӑ пулчӗ: Сталин эпӗ пынине ҫынна хисеплес шутпа пынӑ тесе шутламан, эпӗ пыни чӑнах та апласкер пулман, Сталин эпӗ пынине вӑрҫӑ ҫинчен тата пӗрлешнӗ ҫӗршывсем умӗнче вӑрҫӑпа мир вӑхӑтӗнче яланах тӑракан ыйтусем ҫинчен уҫҫӑн та чунтан калаҫма май пулса тӑнине выранне хурса шутланӑ.

Малтан Сталин манран эпӗ Ӑҫта ҫӳрени ҫинчен ыйтрӗ. Эпӗ ӑна ҫапла каларӑм: Египетра вӑрҫӑ ӗҫӗсем эпӗ хам кӗтнинчен лайӑхрах пыраҫҫӗ, англичансем нумаях пулмасть Роммель ҫарӗсене аркатмаллах пырса ҫапнӑ, мӗнпур Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнче союзниксен вӑрҫӑ лару-тӑрӑвӗ ҫирӗпленчӗ, терӗм.

Пирӗн калаҫун пӗтӗмӗшле пайӗнче эпир вӑрҫӑн питӗ конкретнӑй ыйтӑвӗсем ҫинчен калаҫрӑмӑр, паллах ӗнтӗ, эпӗ вӗсем ҫинчен пӗлтерме пултараймастӑп. Анчах та эпӗ ҫакна калама пултаратӑп: эпӗ панӑ йышлӑ ыйтусем ҫине Сталин уҫҫӑн татӑклӑ ответсем пачӗ. Сталин калани мана ҫакӑн пирки пӗрре те иккӗлентермерӗ: пӗрлешнӗ ҫӗршывсем гитлерла ҫар машинине пӗтерсе тӑкиччен вырӑссем нимӗҫсене кашни высота ҫинче, кашни кӗпер ҫинче, кашни урамра хирӗҫ тӑма хатӗр. Пирӗн калаҫун пӗр пайӗнче Сталин пӗрлешнӗ ҫӗршывсене хӑйсен мӗнпур вӑйне вӑрҫӑ ӗҫӗсене хума тата ҫак ӗҫе питӗ васкаса тума ӳкӗтлесе ӗнчӗ. Вӑл ҫапла каларӗ: тӑрӑшсассӑн хальхи ҫӗнтерме ҫук пек туйӑнакан чӑрмавсене ҫӗнтерме пулать, терӗ. Вӑл илемлӗн калаҫнинче ҫынна ӗнентерекен пысӑк хӑват курӑнса тӑчӗ. Паллах ӗнтӗ, унӑн ҫак пахалӑхӗ вӑл чапа тухнин сӑлтавӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

Эпӗ Сталина ҫапла каларӑм: эпӗ Америкӑна таврӑнса вырӑссен фронтри тыл-ри аслӑ кӗрешӗвӗ ҫинчен каласа парасшӑн ҫунса тӑратӑп, терӗм. Эпӗ каларӑм: мана хӗрарӑмсем заводсенче, госпитальсенче, колхозсенче тата транспортра ӗҫлени уйрӑмах кӑмӑла кайрӗ, терӗм. Сталин юлташ вара ҫапла каларӗ: «Эпӗ пӗр япала тума сӗннине хирӗҫ пулмӑр-и эсир?» терӗ. Эпӗ паллах, ӗнтӗ, килӗшрӗм. Сталин вара ҫапла каларӗ: «Америкӑра эсир хӑвӑр кунта мӗн курни ҫинчен йӑлтах каласа парӑр; калас килсен, американецсене ҫапла калӑр: пире кунта вӗсем хӑйсен питех те пысӑк предприятийӗсенчен яма пултаракан пур материалсем те кирлӗ. Эпир питех те тав тӑвӑттӑмӑр. Анчах та эпӗ сире ҫак ӗҫе лайӑх ӑнлантарасшӑн, эсир американецсене пирӗн тӗлӗшпе хӳтӗлес позици йышӑнма чӗннӗ пек ан тухтӑр», терӗ. Эпӗ ку сӑмахсем инҫене куракан тата сыхӑлӑхлӑ ҫыннӑн сӑмахӗсем вӗт тесе шухӑшласа илтӗм.

Кашни ҫӗнӗ минутӑран эпӗ Сталин уҫҫӑн та тӳррӗн шухӑшлама пултарнине пысӑкрах хак парса пытӑм. Вӑл нихӑҫан та пӗр-пӗр тема тавра явӑнса ҫӳремерӗ, вӑл яланах шӑп кирлӗ точкӑна лекетчӗ, ун хыҫҫӑн урӑх нимӗн каламалли те юлмасчӗ вара. Вӑл хӑй калани чухне — эпир унпа тӑлмач пулӑшнипе калаҫрӑмӑр—ман куҫран пӑхса калаҫрӗ, эпӗ каланӑ чухне вӑл, англичан чӗлхине пӗлмест пулин те, манӑн кашни сӑмаха тӑнласа ларчӗ. Сталин нумай ӗҫлет пулас, тӗнчере никамран та ытларах ответлӑ пулса тӑрать пулас, апла пулин те, вӑл пӑхма питӗ сывлӑхлӑ ҫын пек курӑнать. Вӑрҫӑ унӑн хура ҫӳҫӗсен пӗр пайне кӑвакартса янӑ, анчах та вӑл унӑн чӗрине фашистла тиранние хирӗҫ тата хытӑрах ҫирӗплетнӗ».

Черчилль Дьеппа пырса тапӑнни ҫинчен

ЛОНДОН, октябрӗн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, общинӑсен палатин ларӑвӗнче премьер-министра Дьеппа пырса тапӑннӑ вӑхӑтра авиаци мӗн тери вӑйлӑн пулӑшни ҫинчен темиҫе ыйту панӑ. Черчилль ҫапла каланӑ: Англи авиацийӗ вӑйлӑн пулӑшса пыни мана кӑмӑла каять, тенӗ. Пулас операцисенче авиаципе ҫӗр ҫинчи войскӑсем хушшинче тата ытларах ҫыхӑну тытмалла тумашкӑн кирлӗ мерӑсем йышӑннӑ-и? тесе ыйтсан, Черчилль ҫапла каланӑ: ку ыйту нихӑҫан та пирӗн асран кайман, тенӗ. Англи танкӗсен ҫапӑҫури пахалӑхӗ ҫинчен Черчилль ҫапла каланӑ: урамсем вӗсӗнче чӑрмавсем танксене кӗтмен ҫӗртен тытса чарнӑ, тенӗ. Дьеппа тапӑнас ӗҫе хутшӑннӑ войскӑсен пысӑк пайӗ каялла таврӑннӑ» тенипе Канадӑн национальнӑй оборонин министрӗ «ҫав операцире пулнӑ 5.000 канадецран 3.350 ҫын ҫухалнӑ, (вӗсенчен 2.717 ҫын вилнӗ е пӗр хыпарсӑр ҫухалнӑ)» тени хушшинче килӗшменлӗх пурри ҫинчен ыйту сиксе тухнӑ. Черчилль ҫапла каланӑ: сентябрӗн 8-мӗшӗнче ҫак ыйтупа каланӑ чухне эпӗ ҫав операцире пулнӑ пӗтӗм войскӑсем ҫинчен каланӑ, вӗсенчен чӑнах та пысӑк пайӗ каялла таврӑннӑ. Канада министрӗ вӑл канадецсен ҫухатӑвӗсем ҫинчен ҫеҫ каланӑ, ҫавӑнпа унта нимӗнле хирӗҫӳ те ҫук. Вӑл пирӗн ҫухатусем ҫинчен тӗрӗс цифрӑсем парас тӗлӗшпе питӗ сыхӑлӑхлӑ пулма Ҫав ларура тата ак ҫакӑн пек тӗрлӗ кирли ҫинчен шухӑшласа илмен.

Эрриона арестлени

ЛОНДОН, октябрӗн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Виши влаҫӗсем Эдуард Эрриона арестленӗ. Эдуард Эррио Францин премьер-министрӗ тата Францин депутатсен палатин юлашки председателӗ пулнӑ. Ӑна Лион ҫывӑхӗнче хӑйӗн ҫуртӗнче арестленӗ, ӑна Францирен кайма хӑтланмастӑп тесе сӑмах пама килӗшмен хыҫҫӑн арестленӗ. Хӑйне арестленӗ чухне Эррио ҫапла каланӑ: «Эсир мана кӳрентертӗр. Эсир хӑвӑр хуҫӑрсене ҫапла калама пултаратӑр: эпӗ нимӗнле сӑмах та пама тивӗҫлӗ мар. Манӑн пӗр тӗллев ҫеҫ пур, вӑл тӗллев—Франци шӗн ӗҫлесси. Мӗнле ӗслесси пирки сирӗн ӗҫ ҫук», тенӗ.

Эррио нумаях пулмасть Виши правительствине депутатсен палатин тата сенатӑн яланхи организацийӗсене (бюровӗсене) салатса янӑшӑн вирлӗн протестлесе ҫырнӑ. Виши влаҫӗсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра нимӗҫсем патӗнче ӗҫлесе тӑракан икӗ француз офицерне хисеплӗ легион орденӗпе наградӑланине хирӗҫ протеслесе, Эррио ҫав ордена илме килӗшмен. Виширен пӗлтернӗ тӑрӑх, Эррриона Вальс-ле-Бэнри (Ардет департаменчӗ) Концентрациллӗ лагере янӑ.

ЛОНДОН, октябрӗн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, де Голль генерал Эрриона арестлени ҫинчен ҫапла каланӑ: «Эррио йышӑннӑ хастарлӑ позици ӑна арестленипе тата ытларах ырӑ позици пулса тӑрать. Францин чи лайӑх ҫыннисене тӗрмесене хупнӑ. Эпӗ Эррриона саламлатӑп»,

Англипе Америка авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, октябрӗн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: октябрӗн 2-мӗшӗнче каҫхине Англин ҫыран хӗрринчи авиацийӗн самолечӗсем Льеж ҫывӑхӗнчи металлурги завочӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫав кунах Америка бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем Ҫурҫӗр Францири тӗрлӗ обьектсене тапӑннӑ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

НА ОСНОВАНИИ ПОСТАНОВЛЕНИЯ СОВЕТА НАРОДНЫХ КОМИССАРОВ СССР СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ НАЧАЛИ ПРИЕМ ВЫИГРЫШНЫХ ВКЛАДОВ.

Тиражи выигрышей по выигрышным вкладам производятся два раза в год.

В каждом тираже на 1000 сберегательных книжек разыгрываются:

1 ВЫИГРЫШ—в размере 200% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

2 ВЫИГРЫША—каждый в размере 100% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

22 ВЫИГРЫША—каждый в размере 50% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке.

Вкладчику предоставляется право пополнить свой выигрышный вклад или получить его в любое время частями, либо полностью из сберегательной кассы.

ВНОСИТЕ ВЫИГРЫШНЫЕ ВКЛАДЫ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ.

УПРАВЛЕНИЕ ГОСТРУДСБЕРКАСС И ГОСКРЕДИТА ЧУВАШСКОЙ АССР.

ТРЕБУЕТСЯ кладовщик-экспедитор. Оплата по соглашению.

Обращаться: Чувашская, 66, Центроэлектромонтаж, участок № 6.

—1

ЧЕБОКСАРСКОЙ ТЕХНО-ТКАЦКОЙ ФАБРИКЕ ТРЕБУЮТСЯ:

гл. бухгалтер, помб/х, электмонтеры, женщины и подростки на переквалификацию, чернорабочие, охранники. При ф-ке работает столовая и хлебно-продуктовый ларек, одиночкам предоставляется общежитие.

Адрес ф-ки: пос. Волгостроя, помещ. Черепичного з-да, тел. № 7—16.

АРТЕЛИ „КОЖУПРЯЖЬ" ТРЕБУЮТСЯ:

главный бухгалтер, бухгалтера, зав. складом, технички и охранники.

Обращаться: Набережная реки Кайбулки, д. № 21, правление артели. Телефон 6—79.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА „СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЯ" доводит до сведения всех МТС, совхозов, колхозов, учреждений и организаций, что на складах „Сельхозснабжения" с 28 сентября по 10 октября с/г. проводится инвентаризация товаро-материальных ценностей и состояния расчетов.

Просьба ко всем, имеющим неоконченные расчеты с сельхозснабом, которыми на перечисленные деньги не выбраны из складов товары или оставлены таковые под сохранные расписки завскладов, за получением товаров обратиться до 10 октября, после 10-го числа претензии приниматься не будут.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Калинина, 34. Тел. 0-94.

„СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЕ".

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, снабженческие и складские работники, бухгалтеры и машинистки, мастер по камен. и штукатурн. работам, строит. десятник, коменданты общежитий.

Квалифицированные рабочие: токари, фрезеровщики, револьверщики, строгальщики, автоматчики, шлифовщики, слесари, электро-монтеры, штамповщики, установщики штампов, электро-сварщики, резчики, прессовщики, лаковары, литейщики, модельщики, шорники-смазчики, маляры, каменщики, печники, штукатуры, плотники, столяры, упаковщики-плотники, подсобные рабочие, грузчики, свинари, уборщицы, дворники, сторожа, шофера, автослесари, такелажники, жестянщики.

Требуются вахтеры и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (ученики от 16 лет) по указанным специальностям.

Обращаться: улица Карла Маркса, 80, бюро пропусков, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1331 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 53 84 п. л.